28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 п.

НОЯБРЬ 5 ТУНТИКУН 215 (6966) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Колхозниксемпе колхозницăсем, хресченсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, агрономсем, зоотехниксемпе ветеринарсем! Выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ÿстерсе пырар! Çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парса тăрар!

(ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ ПУЛНĂРАНПА 28 ÇУЛ ÇИТНĔ ТĔЛЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕНЧЕН).

Информациллĕ пĕлтерÿ

Кăçалхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче ВКП(б) Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çак ыйтăва сÿтсе-яврĕ:

ВКП(б) Обкомĕн XXIII-мĕш пленумĕ йышăннă решение пурнăçа мĕнле кĕртни çинчен.—ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарĕ Горбунов юлташăн, ВКП(б) Вăрмар райкомĕн секретарĕ Смирнов юлташăн, ВКП(б) Калинино райкомĕн секретарĕ Никитин юлташăн доклачĕсем.

Сÿтсе-явнă ыйту тăрăх пленум тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Пленум М. А. Андреев юлташа, вăл вĕренме кайнине пула, ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕ пулса ĕçлессинчен хăтарса, ăна ВКП(б) Обком бюровĕн составĕнчен кăларчĕ.

Пленум ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕ пулма Я. К. ПАВЛОВ юлташа çирĕплетсе, ăна ВКП(б) Обком бюровĕн составне кĕртрĕ, çавăн пекех тата ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн вăрман промышленноçĕпе вырăнти топливо промышленность тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ пулса ĕçлеме В. Г. ИМУЛЛИН юлташа çирĕплетрĕ.

ВКП(б) Обкомĕ.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмпех тултарар!

Чăваш республикинчи нумай колхозсем, государствăна срокчен тырă парса татассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсен обязательствисене ăнăçлăн тултарчĕç. Çав колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне те чылай тырă пачĕç. Хĕрлĕ Ялавлă Вăрмар районĕ государствăна тырă парса татса хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртнисĕр пуçне, планран иртерсе государствăна тырă парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна та тултарчĕ.

Анчах та чылай районсемпе колхозсен руководителĕсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе илнĕ хăйсен обязательствисене тултарассишĕн ответлă пулнине ăнланса илмерĕç, государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлнине пĕтерес тесе мĕнпур вăя мобилизацилемерĕç. Çавна пула нумай районсемпе колхозсем халĕ те государствăна тырă пама васкамаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, чылай сахалтарах тырă панă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ĕнер пулса иртнĕ XXIV-мĕш пленумĕ ВКП(б) Улатăр, Калинино тата Вăрмар райкомĕсен секретарĕсен Горбунов, Никитин тата Смирнов юлташсен доклачĕсене сÿтсе-явса çакна палăртрĕ: Улатăр, Калинино тата Вăрмар райкомĕсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIII-мĕш пленумĕ государствăна ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырă парса татас тĕлĕшпе йышăннă решенине пурнăçа кĕртмерĕç. XXIV-мĕш пленум тата çакна палăртрĕ: Улатăр, Калинино тата Вăрмар районĕсен руководителĕсем, государствăна тырă парса татмалли плана кашни колхоз тултармалла тăвас вырăнне, государствăна тырă пама васкаман уйрăм колхозсен руководителĕсен тырпул хатĕрлевне хирĕçле шухăш-кăмăлĕсемпе килĕшсе ларнă, тырпул хатĕрлес ĕçре государствăна хирĕçле практикăна тата саботажа вăхăтра пĕтерсе пыма тăрăшмаççĕ. Çав ăсăннă районсенчи чылай колхозсенче тырă чĕрĕ е тасамар, тесе ăна государствăна парассинчен пытарса хăвараççĕ; ăна тĕплĕн çапса илмесĕр арпа çине нумай яраççĕ тата çапнă чухне ытлашши тăккалаççĕ. Çавăн пекех тата колхозсенче тырра салатса пĕтерНĕ тата государствăна тырă памалли закона куçа-кĕретĕнех пăснă тĕслĕхсем те пур.

Çакăн пек тĕслĕхсем Улатăр, Калинино тата Вăрмар районĕсенче çеç мар, республикăри ытти районсенче те курма пулать. XXIV-мĕш пленум çакна палăртрĕ: Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Çĕмĕрле, Комсомольски, Канаш тата Чкаловски районсен руководителĕсем ВКП(б) Обкомĕн иртнĕ пленумĕ йышăннă решенисенчен тивĕçлĕ выводсем туман, государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлнине пĕтерес тесе татăклă мерăсем йышăнман.

Государствăна тырă парса татас ĕçе ăнăçлăн туса пĕтересси юлса пыракан колхозсенче государствăна тырă парас ĕçе организациленинчен килет. Шăпах ĕнтĕ çакăн пек ялхуçалăх артелĕсенче авăн çапма васкамаççĕ, час-часах тырра колхозрах ытларах тытса усрама тăрăшаççĕ, ăна хăйсене валли ытларах хăварса государствăна сахалтарах пама пикенеççĕ. Первомайски районри «Звезда» колхоз председателĕ Никитин: колхозра государствăна памалли тырă çук, тесе пур майсемпе те ĕнентерме хăтланнă. Çав колхоз государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпе те 37 процент кăна тултарнă. Çав вăхăтрах колхозăн кĕлечĕсенче 20 тонна ытла тырă пулнă, кунсăр пуçне, итемсенче çапман тырă е çуррине çеç çапса илнĕ сĕлĕпе ыраш кĕлтисем темĕн чухлĕ выртнă. Йĕпреç районĕнчи «Ударник» колхоз ... государствăна тырă памалли ... анчах та унăн çапса татнă урпа 70 центнер пур. Йĕпреç районĕнчи «Победа», «Трудовик», «Красный металлист» колхозсенче çапса татнă тырă эрик-эрнипе колхозра выртать.

Куславкка районĕнчи Чашламари «Ударник» колхоз государствăна тырă памалли плана 38 процент çеç тултарнă (522 центнер панă), çав вăхăтрах хуçалăх нушисене тивĕçтерме тата колхозниксене аванс шучĕпе пама 115 центнер салатса пĕтернĕ. Колхоз председателĕ Горчаков хăй те кунта 200 килограмм ытларах тырă илнĕ. Ку колхозра парти Куславкка райкомĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ Лукьянов юлташ пулнă, анчах вăл колхоз ĕçĕпе интересленмен, закона пăснине асăрхаман.

XXIV-мĕш пленум районсен руководителĕсене уйрăм колхозсен руководителĕсем государствăна тырă парас ĕçе чарса тăнине, колхоз тыррине салатса пĕтернине, государствăна тырă парса татиччен, закона пăхăнмасăр, тĕрлĕрен фондсем туса государствăна хирĕçле ĕç тунине пĕтерме, государствăна тырă парса татмалли плана ноябрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашни колхоз, совхоз, подсобнăй хуçалăх тата уйрăм хуçалăх тăрăх тултармалла тăвас тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлнăлăха пĕтерес енĕпе Кувакино, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски, Первомайски, Комсомольски, Канаш тата Йĕпреç районĕсенче уйрăмах вăйлă ĕçлемелле.

Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана тултарнипе пĕр вăхăтрах планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассине, çавăн пекех тата МТС-сем çитес çул ĕçлессишĕн аванс шучĕпе натуроплата парассине анлăн сарса ямалла.

Государствăна тырă парас хăвăртлăх нумай районсенче халĕ авăн çапас ĕç мĕнле пынинчен килет. XXIV-мĕш пленум Чăваш АССР Наркомземне, ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене тата МТС-сен директорĕсене авăн çапас ĕçе татăклăнах хăвăртлатма, МТС молотилкисемпе комбайнĕсем пĕр чарăнмасăр ĕçлессине организацилеме, авăн çапмалли плана пĕр сăмахсăрах тултарма тата МТС ĕçленĕшĕн тÿлемелли натуроплатăна пухса пĕтерме хушса хăварчĕ. Кăçалхи ноябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр мĕнпур кĕлтесене капана хывса пĕтермелле.

Юлашки вăхăтра комсомол организацийĕсем тырпулпа çĕрулми хатĕрлес ĕçре сÿрĕкрех ĕçлеме тытăнчĕç. XXIV-мĕш пленум ВЛКСМ Обкомне тата ВКП(б) райкомĕсене государствăна тырă, çĕрулмипе пахчаçимĕç парас ĕçе пур комсомол организацийĕсене те активлăн хутшăнтарма, ялхуçалăх продукчĕсене леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен транспорт бригадисен ĕçне лайăхлатма, капан хывма тата авăн çапма комсомолецсемпе çамрăксенчен бригадăсем организацилеме хушса хăварчĕ.

Пленум парти, совет тата хатĕрлев органĕсен руководителĕсене государство склачĕсенче тырпула тĕрĕс-тĕкĕл пăхса усрама, ăна пăсăласран тата çаратса пĕтересрен сыхлама хушрĕ. Пленум йышăннă тăрăх, ноябрĕн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче пур хатĕрлев пунктĕсенче те, элеваторсемпе армансенче тырпула мĕнле илнине тата мĕнле сыхласа усранине тĕрĕслеççĕ.

Республикăри чылай районсем государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç парас тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ. Государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç памалли плана ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашни колхоз тăрăх тултармалла. Государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç памалли плана уйрăм çынсем тултарасси çине раснах тимлĕн пăхмалла.

СССР Верховнăй Советне, суйлама хатĕрленнĕ май ĕççыннисен патриотла хавхаланăвĕ çĕнĕрен çĕкленсе кайрĕ. Çакăн пек вăхăтра парти организацийĕн массăллă ĕçе вăйлатмалла, массăсене ялхуçалăх сулне хăвăртрах вĕçлеме, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене хăвăртрах тултарма мобилизацилемелле.

Удмурт АССР Верховный Совечĕн Президиумне Удмурт АССР Халăх Комиссарĕсен Советне ВКП(б) Удмурт Обкомне

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Удмуртсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцие Удмурт автономине туса хунăранпа 25 çул тултарнă кун салам яраççĕ.

Удмурт АССР-ĕнчи ĕççыннисем Совет влаçĕ аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Патша Российи вăхăтĕнче кайра пынă облаçран Удмурт республики вăйлă республика пулса тăчĕ, унта социализмлă промышленность, колхозлă çĕр ĕçĕ тата культура аталанса пыраççĕ. Республикăра пуçламĕшпе вăтам шкулсем, клубсем, вулав çурчĕсем тата библиотекăсем нумай. Институтсемпе техникумсенче специалистсен нациллĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Отечественнăй вăрçăра удмурт ĕççыннийĕсем Совет çĕршывне хăйсен вăйне шеллемесĕр хÿтĕлерĕç. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хастарлăн та паттăррăн çапăçнăшăн удмурт халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Удмурт Республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара геройла ĕçлесе пулăшрĕç.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ çакна çирĕп шанса тăраççĕ: Удмурт АССР-ĕнчи ĕççыннисем хуçалăхпа культурăна малалла аталантарса пырассишĕн ырми-канми кĕрешĕç, тăван Совет çĕршывне вăйлатма хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе тăрĕç.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн Центральный Комитечĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри Суйлав Комиссин составне кандидатсем тăратни

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ стахановец-орденоносец Е. В. Дмитренко юлташа кандидата тăратать

Ĕнер Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне кандидатсем тăратас тĕлĕшпе рабочисен, служащисен тата инженерсемпе техниксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху председателĕ Гарковцев юлташ Борох юлташа сăмах парать.

— Пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем, — тет Борох юлташ, — аслă çулпуç тата учитель Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, кăçал Германипе Японии империалисчĕсене тĕппипех аркатса тăкрĕç. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, Октябрьти Социализмлă Аслă Революцире çĕнтерсе илнĕ тивĕçлĕхе чыслăн упраса хăварса, совет халăхне мирлĕн ĕçлеме условисем туса пачĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине тата СССР Верховный Совечĕн суйлавне Совет Союзĕнчи халăхсем производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Пирĕн завод коллективĕ суйлав ĕçне хастарлăн хутшăнма, Суйлав Комиссине халăх шанса тăракан чи лайăх представительсене уйăрса яма пулать.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне,—тет Борох юлташ малалла,—эпĕ заводри чи лайăх стахановецсенчен пĕрине, лайăх ĕçленĕшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă слесарь-инструментальщика Евгений Васильевич Дмитренкона кандидата тăратма сĕнетĕп. Пирĕн завод коллективĕ манăн çак сĕнĕве хапăл туса йышăнассине шанса тăратăп.

Борох юлташ хыççăн заводри слесарь Яковлев, строгальщик Белов тата главнăй конструктор Эйдельштейн юлташсем Дмитренко юлташ кандидатурине хапăл туса йышăнни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнче Дмитренко юлташ, заводран тухмасăр 16-шар сехет тата ытларах та ĕçлесе, кулленхи нормăна 400—500 процента çити тултарни çинчен каласа пачĕç. Дмитренко юлташ общество ĕçĕнче те хастарлăн ĕçлет. Кулленхи ĕçре вăл пĕрмаях ÿссе пырать. Халĕ ăна инструментальнăй цех начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

— Пухăва килнисене пурне те эпĕ Дмитренко кандидатуришĕн сасăлама чĕнетĕп,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Эйдельштейн юлташ.

Завод коллективĕ, пĕр саслă пулса, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Евгений Васильевич Дмитренко юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Педагогика институчĕн коллективĕ А. А. Кондакова юлташа кандидата тăратать

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарти Педагогика институтĕнче студентсен, профессорсемпе преподавательсен тата служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва партбюро секретарĕ Н. И. Иванов юлташ уçать:

Çичĕ çынран президиум суйланă хыççăн, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комисси составне кандидатсем тăратас ыйтупа В. Т. Харитонов юлташ сăмах илет.

— Аслă Октябрь 28 çул тултарнине, — тет Харитонов юлташ,—эпир СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра кĕтсе илетпĕр. Çитес суйлавсене пирĕн тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле, Верховный Совет депутачĕсем пулма Ленин—Сталин партийĕн ĕçне чун-чĕререн парăнса тăракан, халăх интересĕсемшĕн тăрăшакан çынсене суйламалла.

Пирĕн институтри коллективра пин çын ытла шутланать. Çав пысăк коллектив ячĕпе эпĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне биологи наукисен кандидатне Александра Анемподистовна Кондакова юлташа кандидата тăратма сĕнетĕп. Вăл Республикăри Суйлав Комиссийĕн составĕнче пулма пур енчен те тивĕçлĕ.

Ун хыççăн Кириллова юлташ сăмах илет.

— А. А. Кондакова юлташ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссинче пулма тивĕçлĕ. Эпĕ ăна темиçе çул хушши пĕлетĕп. Халĕ вăл биологи наукисен докторĕ пулма диссертаци хатĕрлет. Пирĕн институтра вăл 9 çул хушши естествознани факультечĕн деканĕ пулса ĕçлерĕ, халĕ зоологи кафедрине ертсе пырать. Çакăнпа пĕрлех вăл агитатор пулса ĕçлет.

Кириллова юлташ хыççăн математика факультечĕн деканĕ М. Д. Мотуз юлташ сăмах тухса калать:

— А. А. Кондакова юлташа, — тет вăл,—эпĕ 1936 çултанпах пĕлсе тăратăп. Унăн кандидатури пур енчен те килĕшмелле. Творчествăллă ĕçре вăл хăйне лайăх палăртрĕ. Хам енчен эпĕ унăн кандидатурине тăратнипе килĕшсе, кунта пухăннисене пурне те çав кандидатурăшăн сасăлама сĕнетĕп.

Юлашкинчен студентка-отличница Лысенина сăмах тухса калать.

— Пирĕн факультет Институтра вĕренÿ тĕлĕшпе те, ытти ĕçсем енĕпе те малта пырать. Факультет малта пыни вăл декан лайăх ĕçленинчен те нумай килет. Эпĕ те, ытти юлташсем пекех, А. А. Кондакова кандидатурипе килĕшсе, уншăн сасăлама чĕнетĕп.

Пухура пулнă 800 çын, пĕр саслă пулса, Александра Анемподистовна Кондакова юлташа Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комисси составне кандидата тăратма йышăнчĕç.

Шупашкарти пир-авăр фабрикин коллективĕ республикăри Суйлав Комиссин составне А. И. Скворцова юлташа кандидата тăратать

Шупашкарти пир-авăр фабрикин çип арлакан цехĕн анлă пÿлĕмĕнче халăх йышлă. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссине фабрика коллективĕнчен кандидат тăратас ыйтăва сÿтсе-явма пухăннă.

Малтанах Шустерман юлташ сăмах илет.

— Республикăри Суйлав Комиссине пирĕн,—тет вăл,—шанчăклă тата тивĕçлĕ юлташа уйăрса ямалла. Ман шутпа Александра Ивановна Скворцова юлташ чи лайăх кандидат пулса тăрать. Вăл производствăра та лайăх ĕçлет, обществăллă ĕçе те лайăх туса пырать. Фабрикăра ĕçлеме пуçланă хыççăн кĕске вăхăт хушшинчех А. И. Скворцова юлташ ватерщица специальноçне хăвăрт вĕренсе çитрĕ те, пирĕн фабрикăри чи лайăх стахановкăсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Шустерман хыççăн Недорезова ватерщица сăмах тухса калать.

— Çамрăк работница Скворцова юлташ,—тет вăл,—фабрикăри чи лайăх стахановкăсенчен пĕри пулса тăрать. Ман шутпала, вăл эпир шанса янине тивĕçлĕ пулма пултарать. Хам енчен эпĕ Республикăри Суйлав Комиссине А. И. Скворцова юлташ кандидатурине тăратма сĕннине ырлатăп.

Недорезова юлташ хыççăн тухса калакан Гаврилова бригадир тата çип арлакан фабрика заведующийĕ Рычкова юлташ та çавăн пекех А. И. Скворцова ĕçне ырласа калаççĕ.

— Стахановла ĕçленине пула Скворцова юлташ пирĕн коллективра авторитетлă çын шутланать. Ăна хушнă ĕçе лайăх туса пырĕ, тесе эпир шанса тăратпăр.

Фабрикăри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, пĕр шухăшлă пулса, Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ватерщица пулса ĕçлекен А. И. Скворцова юлташа Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне кандидата тăратма йышăнаççĕ.

Чăваш республикинчи парторганизаци Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Я. К. Павлов юлташа кандидата тăратнă

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Чăваш республикинчи парти организацийĕнчен кандидат тăратасси çинчен сÿтсе-яврĕ.

Обком бюровĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Чăваш республикинчи парти организацийĕнчен ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарьне Яков Кузьмич Павлов юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ НОЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ АВĂН ÇАПАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă
1. Шăмăршă	96,9
2. Чкаловски	88.0
3. Вăрнар	87,2.
4. Йĕпреç	86,8
5. Первомайски	86,8
6. Тăвай	84,2
7. Калинино	84,0
8. Канаш	83,9
9. Елчĕк	83,8
10. Шупашкар	83.7
11. Куславкка	83,7
12. Красноармейски	83,5
13. Октябрьски	83,3
14. Комсомольски	83,3
15. Çĕрпÿ	83,3
16. Вăрмар	82,4
17. Элĕк	82,4
18. Ишлей	81,9
19. Хĕрлĕ Чутай	80.0
20. Сĕнтĕр	79,2
21. Шăхасан	78,8
22. Чурачăк	78,6
23. Муркаш	74,9
24. Кувакино	74,1
25. Улатăр	73,2
26 Сĕнтĕрвăрри	72,7
27. Çĕмĕрле	72,3
28. Пăрачкав	68,3
29. Советски	68,3
30. Етĕрне	68,0

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем НОЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Тракторпа ĕçленĕ	Авăн çапнă
1. Вăрнар	163,3	170,7
2. Шăхасан	143,3	48,4
3. Куславкка	146,6	54,1
4. Елчĕк	133,1	75,0
5. Йĕпреç	131,7	73,1
6. Вăрмар	125,4	115,6
7. Красноармейски	125,1	60,9
8. Канаш	124,8	51,9
9. Çĕрпÿ	123,6	69,5
10. Ишлей	123,0	36,3
11. Чкаловски	117,3	102,5
12. Калинино	113,0	71,0
13. Комсомольски	110,9	51,7
14. Улатăр	102,8	70,1
15. Первомайски	102,6	43,0
16. Тăвай	101,6	65,5
17. Шупашкар	100,5	43,6
18. Элĕк	100,0	79,7
19. Сĕнтĕр	97,4	27,8
20. Сурмайдан	94,1	57,2
21. Сĕнтĕрвăрри	90,1	21,7
22. Çĕмĕрле	89,2	47,4
23. Етĕрне	88,2	54,0
24. Октябрьски	87,0	10,1
25. Хĕрлĕ Чутай	84,2	14,5
26. Кувакино	77,0	48,9
27. Сиява	75,4	57,0
28. Шăмăршă	74,8	22,9
29. Пăрачкав	69,1	71,5

Государствăна тырă парса татнă

Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ял Советне «Новый путь», «Красное знамя» тата «Знамя» колхозсем кĕреççĕ. Вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тесе пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. «Новый путь» колхоз государствăна тырă парса татрĕ. Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе 120 центнер пачĕ. Çак колхозра И. Дудкин ертсе пыракан бригада ăнăçлă ĕçлерĕ. Вăл тырă парса татнă хыççăн ытти бригадăсене пулăшрĕ. Колхоз авăн çапса та пĕтерчĕ.

«Знамя» колхоз (председателĕ Н. Алексеев юлташ) государствăна тырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç парса татнă, авăн çапса пĕтернĕ. «Знамя» колхоз кĕрхи çĕртме тумалли плана та ăнăçлăн тултарнă.

П. ЩЕРБАКОВ.

...ăмах панă та ун çинчен маннă

КУКЕÇ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна тырпул памалли плана сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕччĕ. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ, анчах та район татах 800 тонна тырă памалла. Юлашки вăхăтра государствăна тырă парас ĕç вăрахланчĕ. Октябрĕн 20-мĕшпе 25-мĕшĕ хушшинче 41 тонна тырă леçнĕ пулсан, октябрĕн 25-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче вара пурĕ те 29 тоннă çеç леçнĕ.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе Шăнкас, Иккасси, Чăкăр, Шуркасси ял Совечĕсенчи колхозсем уйрăмах юлса пыраççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

СЫВӐ ПУЛТӐР ТА ЧЕЧЕКЛЕНСЕ ПЫТӐР ПИРӖН АСЛӐ ТӐВАН ÇӖРШЫВ!

Аслӑ Совет халӑхӗ çӗнтерӳллӗ социализмла революци 28 çул тултарнине хаваслӑн кӗтсе илет. Пӗтӗм халӑхӑн Октябрьти уявне эпир кăçал, тӑвата çул хушши пынӑ вӑрçӑ хыççӑн, малтанхи хут мирлӗ условире палӑртатпӑр. Хаяр та хӗрхенӳсӗр тӑшмана хирӗç пынӑ аслӑ çапăçусем хыçа тӑрса юлчӗç. Çав çапăçусем пирӗн Тӑван çӗршывӑн кун-çулӗшӗн, Совет Союзӗнчи халӑхсен—большевиксен партийӗ ертсе пынипе социализм тунӑ халӑхсен кун-çулӗшӗн пулса иртрӗç. Социализмлӑ мирлӗ строительство вӑхӑтӗнче ССР Союзӗн çав тери анлӑ талкăшӗсем тӗпренех улшӑнчӗç, халӑхӑн пурнăç условийӗсем тӗпренех лайӑхланчӗç, унӑн культури çӳле çӗкленчӗ. Совет çӗршывӗ социализмлӑ общество туса пӗтерес çулпа шанчӑклӑн малалла пырса, ерипенех коммунизм патне куçса пыратчӗ.

Çав ăнăçусене курнипе урса кайнӑ хаяр тӑшман пирӗн государствӑна пӗтерсе тӑкма, совет çыннисене нимӗçлентерсе нимӗç баронӗсемпе князӗсен чурисем туса хума шутларӗ.

Пирӗн çӗршыв çине капланса килнӗ хӑрушлӑх çинчен каланӑ май, вӑрçӑн малтанхи кунӗсенчех Сталин юлташ çапла асӑрхаттарчӗ: «Ӗç кунта Совет государствин пурнăçӗпе вилӗмӗ çинчен, ССР Союзӗнчи халӑхсен пурнăçӗпе вилӗмӗ çинчен, Совет Союзӗнчи халӑхсем ирӗклӗ пуласси е чуралӑха кӗрсе ӳкесси çинчен пырать». Пирӗн çӗршыв çине капланса килнӗ хӑрушлӑх çав вӑхӑтрах прогрессиллӗ мӗнпур этемлӗхшӗн те вилӗмлӗ хӑрушлӑх пулса тӑнӑ. Нимӗçсен çар машинин çулне пӳлсе лартма пултаракан, гитлерла çарӑн хӑватне хуçма пултаракан пӗртен-пӗр вӑй—Совет Союзӗ пулчӗ. Çапла ӗнтӗ, демократин кун-çулӗ тата мӗнпур этемлӗхӗн прогресӗ ССР Союзӗнчи халӑхсен кӗрешӗвӗ мӗнле пӗтнинчен килнӗ.

Халӗ ӗнтӗ çав хаяр кӗрешӳве пула пирӗн çӗршыв, пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Çар çав вилӗмлӗ хӑрушлӑха ССР Союзӗнчи халӑхсем умӗнчен тата пӗтӗм тӗнчери халӑхсем умӗнчен сирсе янине ӑнланса илни кӑмӑла çӗклентерет. Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтӗнче Гитлерӑн ытти государствӑсене пӗтермелли тата тӗнчере фашизм пуçпулса тӑмалли планне çӗр ăшне чиксе хунӑ. Совет çыннисем хӑйсем тунӑ социализмлӑ строя—кучухнехи обществӑн прогрессиллӗ аталанӑвӗн чи çӳлти сыпӑкне хӳтӗлерӗç, коммунизм патнелле пӗр чарӑнмасӑр малалла каймалли правана сыхласа хӑварчӗç. Хӗрлӗ Çарпа союзниксен çарӗсем фашизма пӗтерсе тӑкнипе историре ку таранччен пулман чи хаяр та хура, чи реакциллӗ вӑя пӗтерсе тӑкрӗç. Сталин юлташ ирӗклӗхе юратакан халӑхсен çак çӗнтерӗвӗн пӗтӗм тӗнчери историллӗ пӗлтерӗшӗ çинчен каланӑ май, ӑна мӗнпур этемлӗхӗн прогрессиллӗ аталанӑвӗн аслӑ маякӗсем, тесе ят панӑ.

Фашизма аркатас ӗçре Совет государствин татӑклӑ вырӑнӗ Германие çӗнтернипех чарӑнса тӑман-ха. Нимӗçсен фашистла захватчикӗсене аркатса тӑкнӑ хыççӑн, ССР Союзӗ, союзниксемпе тунӑ килӗшӳве тӳрӗ кӑмӑлпа пурнăçа кӗртсе пырса, вӑрçӑн юлашки вучахне хӑвӑртрах пӗтерес тесе тата пӗтӗм тӗнчипе мир тӑвас тесе, Японие хирӗç пыракан вӑрçа хутшӑнчӗ. Çак ӗнтӗ союзниксемпе Японии хушшинчи вӑрçа мӗнле пӗтессине татса пачӗ, çакна пула Япони агрессорӗсене аркатса тӑкнӑ та вӗсене пӗр сӑмахсӑрах парӑнмалла тунӑ.

Хӗвеланăçӗнче те, Хӗвелтухăçӗнче те агрессорсен блокне хирӗç ирӗклӗхӗн аслӑ вӑрçине хутшӑнса Хӗрлӗ Çар Европӑпа Азири миллионшар çынсене чуралантарассинчен тата вӗлерсе пӗтерессинчен çӑлса хӑварчӗ. Югослави пуçӗ Отон Жуланчич пӗтӗм халӑхсен шухӑш-кӑмӑлне палӑртса çапла калать: «Совет Союзӗ хӑйӗн халӑх çарӗпе пире тата пӗтӗм Европӑна чи хӑрушӑ кун-çулран—чуралӑхпа вилӗмрен çӑлман пулсан, пире çӗр çийӗнчен шӑлса тасатнӑ пулӗччӗç».

Совет халӑхӗ этемлӗхшӗн тунӑ çав тери пысӑк ӗçе палӑртса американецсен журналисчӗ Эдгар Сноу çапла çырать:

«Совет Союзӗ парӑннӑ пулсан, эпир пӗрре те вӑрçӑ пӗтнӗ кунччен пурӑнман пулӑттӑмӑр... ССР Союзӗ нацизма пӗтерсе тӑкиччене çапăçма татӑклӑн шутлани тӗнчене çӑлса хӑварчӗ». Совет державин авторитечӗ çав тери ӳссе кайрӗ, мӗншӗн тесен ССР Союзӗ пӗтӗм тӗнчери мирпе халӑхсен хӑрушсӑрлӑхӗн чи шанчӑклӑ та чи çирӗп тӗревӗ пулса тӑнине мӗнпур тӗнче курса ӗненчӗ. Совет Союзӗн халӑхӗ Хӗвеланăçӗнчипе Хӗвелтухăçӗнчи аркатса тӑкнӑ агрессорсене çарпа экономика тӗлӗшӗнчен тӗппипех хӗçпӑшалсӑрлантарассишӗн, фашизма моральпе политика тӗлӗшӗнчен тӗппипех аркатса тӑкассишӗн кӗрешет. Пӗтӗм тӗнчери хӑрушсӑрлӑхӑн çӗнӗ системине тӑвассишӗн, аслӑ державӑсен пӗрлӗхне çирӗплетессишӗн пыракан кӗрешӳре пирӗн çӗршыв ертсе пыракан вырӑна йышӑнса тӑрать.

Отечественнӑй вӑрçӑра Совет государстви çӗнтерни пирӗн Тӑван çӗршывӑн кун-çулӗнче Октябрьти революци историллӗ çав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине татах та уçӑмлӑрах кӑтартса пачӗ. Октябрьти революци пирӗн халӑха Российӑн техникӑпа экономика тӗлӗшӗнчи ӗмерхи кая юлнӑлӑхне историллӗ кӗске вӑхӑтрах çӗнтерсе, пирӗн Тӑван çӗршыва тӗнчери социализмлӑ аслӑ держава туса хума май пачӗ. «Октябрьти революци туса хунӑ социализмлӑ строй,—терӗ Сталин юлташ,—пирӗн халӑхпа пирӗн çара никам çӗнтерейми аслӑ вӑй пачӗ».

Çак вӑрçӑра хӑватлӑ Совет çӗршывӗ вырӑнне революцичченхи кивӗ Россия пулнӑ пулсан, вӑл Европӑри капитализмлӑ ытти çӗршывсем пекех, çав тери пысӑк катастрофӑна кӗрсе ӳкме пултарнине пурте ӑнланаççӗ. Социализмлӑ революцин вут-хӗмӗнче çуралнӑ государство çеç хӑйӗн никама парӑнманлӑхне, хӑйӗн çӗнтерӗвӗсене хӳтӗлесе хӑварса, Европӑри халӑхсене тата вӗсен цивилизацине фашистла хӑрушлӑхран çӑлса хӑварма пултарчӗ. Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ аталанса пыни Совет халӑхне Ленин—Сталин партийӗн политики тӗрӗссине татах та тепӗр хут кӑтартса пачӗ. Вӑрçӑ Ленин малтанах курса каласа панӑ пекех аталанса пычӗ. «Российӑна кирек епле килсе тапӑнма хӑтланни те, Российӑна хирӗç пуçласа янӑ пур вӑрçӑсем те,—тенӗ Владимир Ильич,—ун пек тапӑнусем, тен, пӗрре çеç пулмӗç,—анчах та эпир хамӑрӑн опытпа пиççе çирӗпленнӗ, хамӑрӑн пурнăçри опыта кура, çавӑн пек хӑтланнисем пурте нимӗн юлмиех саланса каяссине пӗлетпӗр. Тӑшмансем çавӑн пек кашни хӑтланмассеренех эпир вӑрçӑран малтанхинчен вӑйлӑрах пулса тухӑпӑр».

Тӑшман Совет халӑхне чуралантарма шутлани тӑшмана пӗтӗмпех аркатса тӑкнипе пӗтрӗ. Хӗрлӗ Çарӑн аслӑ çӗнтерӗвне пула хӗвеланăçӗнчен нимӗçсем килсе тапӑнассинчен тата хӗвелтухăçӗнчен японецсем килсе тапӑнассинчен хӑтӑлнӑ Совет çӗршывӗ вӑрçӑ вӑхӑтӗнче çирӗпленсе вӑйлӑланчӗ. Вӑл халӗ çирӗпленнӗ вӑй-хӑватпа мирлӗ, творчествӑллӑ ӗç çине куçса пырать.

Çавӑн пекех тата çӗршывсем те вӑрçӑран мирлӗ вӑхӑта куçса пыраççӗ. Анчах та çак процесс мӗн тери уйрӑм условисенче пулса пынине курма йывӑр мар. Капитализмлӑ çӗршывсенче çакӑн пек улшӑну йӗркеллӗ пулса пымасть, унта ӗççыннисен пурнăçӗ палӑрмаллах начарланса пырать. Предприяти хуçисем хӑйсен завочӗсене хупса, рабочисене ӗçрен кӑларса яраççӗ. Пирӗн Совет Союзӗ мирлӗ строительствӑна йӗркеллӗ те план тӑрӑх куçса пырать. Пирӗн çӗршывра ытти çӗршывсенчи пек, нимӗнле хуманну-пӑлхану тавраш те пулмасть.

Вӑрçӑран мирлӗ строительство тапхӑрне куçас ӗçре Хӗрлӗ Çартан аслӑрах çулти çынсене киле яни те питӗ пысӑк ӗç пулса тӑрать. Халӗ халӑх хуçалӑхӗн пур отраслӗсене те опытлӑ, пултаруллӑ работниксем пиншерӗн, çӗршер пиншерӗн пырса кӗреççӗ. Вӗсем мирлӗ ӗçе хӑйсем фронтра туяннӑ паттӑр йӑласене, çирӗп дисциплинӑпа йӗркелӗхе илсе пыраççӗ.

Экономика тӗлӗшӗнчен ССР Союзӗ вӑрçӑран мирлӗ тапхӑра куçнине çӗнӗ пилӗкçуллӑх планне тунипе палӑртать. Сталинла тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑх планӗ вӑл—халӑх хуçалӑхӗн пур отраслӗсене те, пирӗн халӑх пурнăçӗн пур пайне те юсаса ура çине тӑратмалли тата творчествӑллӑ çӗнӗ ӗçсем тумалли аслӑ план пулса тӑрать.

Вӑрçӑ пирӗн çӗнтерӳпе пӗтнине пула питӗ пысӑк материальнӑй пурлӑхсем, нумай работниксем пушанса ирӗке тухрӗç. Вӗсемпе халӗ тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑхӑн пысӑк задачисене татса парас ӗçре усӑ курмалла. Паллӑ ӗнтӗ, пӗрремӗш тӗнче вӑрçи хыççӑн Европӑри çӗршывсен хуçалӑхне юсаса ура çине тӑратма вуншар çул кирлӗ пулнӑ. Ун чухне çав çӗршывсене, 1941—1945 çулсенчи вӑрçӑра ССР Союзне кӳрсе хӑварнӑ сиенпе танлаштарсан, чылай сахалрах сиенленӗ пулнӑ. Социализмлӑ система пуçпулса тӑни нимӗçсем аркатса хӑварнӑ, çаратса кайнӑ тата пӗтерсе тӑкнӑ пурлӑхсене кӗске срокра юсаса ура çине тӑратма çеç мар, тата çӗнӗрен пысӑк çитӗнӳсем тума та май парать.

Тӑшмана çӗнтерес тесе Совет халӑхӗ питӗ пысӑк жертвӑсем турӗ. Халӗ ӗнтӗ çӗнтерӳн результачӗсене çирӗплетсе хӑвармалла. Çавна тӑвас тесен, хамӑрӑн державӑн вӑрçӑри вӑй-хӑватне ывӑнма пӗлмесӗр çирӗплетсе пымалла. Çавӑнпа та ӗнтӗ Хӗрлӗ Çарӑн вӑй-хӑватне çирӗплетме тӑрӑшни, çар техникине тӑвас ӗçе татти-сыпписӗр лайӑхлатса пыни мӗнпур совет çыннисен питӗ паха патриотла тивӗçӗ пулса тӑрать.

Октябрьти Социализмлӑ революци уйрӑмлӑхӗ тата çакӑ пулса тӑрать: вӑл пирӗн халӑха ирӗклӗх панипе кӑна мар, тата пуян та культурӑллӑ пурнăç тума материальнӑй условисем туса панипе ытти пур революцисенчен те уйрӑм тӑрать. Сталин юлташ совет хуçалӑх системин пӗлтерӗшӗ çинчен каланӑ май, темиçе хутчен те çакна кӑтартса пачӗ: материальнӑй тата культура тӗлӗшӗнчи пирӗн производство аталанӑвӗ ӗççыннисен пурнăç условийӗсене тӑтӑшах лайӑхлатса пырас принципа пӑхӑнса пырать. Социализмлӑ строительство вӑхӑтӗнче совет влаçӗпе большевиксен партийӗ çав задачӑсене пурнăçа кӗртес тӗлӗшпе ӗмӗрне курман пысӑк çитӗнӳсем турӗç.

Халӗ ӗнтӗ сывах вӑхӑтрах вӑрçӑччен шайран иртсе каяс тата мӗнпур халӑхӑн культурӑпа ырлӑх ӳсӗмне малалла çитенмелле тӑвас паха задача тӑрать. Ленин—Сталин партийӗ çак ӗç çине уйрӑмах тимлӗн пӑхать. Вӑл Тӑван çӗршыв ячӗпе ӗççыннисене çӗнӗрен паттӑрла ӗçсем тума чӗнет. Нимӗç захватчикӗсем оккупациленӗ районсенче аркатса хӑварнӑ хуçалӑха юсаса ура çине тӑратмалла, хамӑрӑн хуласемпе ялсене илемлӗрех тумалла, пурӑнмалли çуртсене, шкулсемпе больницӑсене, фабрикӑсемпе электростанцисене, шахтӑсемпе заводсене юсаса ӗçе ямалла тата çӗнӗрен туса лартмалла, халӑхӑн пурнăç условийӗсене лайӑхлатмалла, — çапла чӗнсе калать ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ Октябрьти Социализмлӑ Революци 28 çул тултарас умӗн. Çакна тӑвас тесен, йывӑр промышленноçпа çӑмӑл промышленность предприятийӗсен, апат-çимӗç промышленноçӗпе пир-авӑр промышленность предприятийӗсен, кӑмрӑк промышленность предприятийӗсен тата ыттисен те кунран кун ытларах та ытларах продукци туса кӑлармалла. Çакна тӑвас тесен, колхозсемпе совхозсен тырпул тата ытти тӗрлӗ продуктсем ытларах туса памалла, çӗнӗ çуртсем, поселоксем, хуласем хӑвӑртрах тӑва-тӑва лартмалла. Халӑхӑн нушисене тивӗçтерессишӗн тӑван атте-анне пек, Сталин пек тӑрӑшасси—пирӗн мӗнпур работниксен, кирек хӑш вырӑнта ӗçлекен чи пӗчӗк работникрен пуçласа чи аслине çитиех, чи таса тивӗçӗ пулса тӑрать. Çаксене пурнăçа кӗртсе пырсан тин хамӑрӑн умра тӑракан задачӑсене ăнăçлӑн татса пама пулать.

Пирӗн çӗршыв вӑрçӑран мирлӗ тапхӑра куçни, политика тӗлӗшӗнчен илсен, СССР Верховнӑй Советне суйлама хатӗрленнипе палӑрса тӑрать. 1946 çулхи февралӗн 10-мӗшӗнче пулмалли суйлав пирӗн халӑхӑн политикӑллӑ активлӑхне татах та çӳлерех çӗклӗ. Влаçӑн аслӑ органне халӑх хӑйӗн чи лайӑх ывӑлӗсемпе хӗрӗсене суйласа лартӗ. Çав суйлав, паллах, совет халӑхӗн мораллӗ-политикӑллӑ пӗрлӗхне, вӑл Ленин—Сталин партийӗ тавра пӗтӗçнине çӗнӗрен кӑтартса парӗ. Çав суйлав советӑн хӑватлӑ организмне çӗнӗ вӑй хушса парӗ, тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑхӑн аслӑ задачисене татса парассишӗн кӗрешес ӗçре халӑхӑн вӑйне ӳстерӗ.

Кăçалхи Октябрь уявӗ пирӗн Тӑван çӗршыв тӑшманӗсене парӑнтарса аслӑ Çӗнтерӳ тунипе çеç çуталса тӑмасть. Совет çыннисен çулне пирӗн государство ӳсӗмӗн аслӑ пуласлӑхӗсем çутатса тӑраççӗ. Совет халӑхӗ сталинла тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑх планне тума тытӑнса, социализм строительствин вӑрçӑ татнӑ творчествӑллӑ ӗçне çӗнӗ вӑйпа малалла туса пыма тытӑнать. Вӑл хамӑрӑн государствӑн—ССР Союзӗнчи халӑхсен телейӗпе мухтавӗн тӗрекне, прогрессиллӗ мӗнпур этемлӗхӗн шанчӑкне—татах та ытларах çирӗплетессишӗн çӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗçлеме хатӗр. Большевиксен партийӗн çулӑмлӑ идейисем хамӑрӑн социализмлӑ Тӑван çӗршыв ячӗпе пирӗн халӑха мухтавлӑ та паттӑр ӗçсем тума хавхалантараççӗ.

Совет халӑхӗ хӑйӗн Тӑван Ленин—Сталин партине çав тери юратать. Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ вӑрçӑ ӗçне, политикӑпа государство ӗçӗсене ертсе пыни пирӗн Тӑван çӗршыва историллӗ çӗнтерӳсем патне илсе пычӗ. Совет Союзӗнчи ӗççыннисем социализмлӑ Тӑван çӗршывӑн пулас çӗнтерӗвӗсенче те коммунистсен партийӗ тата совет халӑхӗсен çулпуçӗ Сталин юлташ ертсе пырассине тата организацилессине лайӑх пӗлсе тӑраççӗ.

28 çул хушши ӗнтӗ большевиксен партийӗ Совет государствине пуçпулса ертсе пырать. Ленин—Сталин партийӗ вӑл хӑйӗн речӗсене тӑтӑшах çирӗплетсе пыракан, хӑй халӑхпа çыхӑнса ӗçлессине тӑтӑшах вӑйлатса пыракан тӗнчери пӗртен-пӗр парти пулса тӑрать. «Халӑх массисем хушшинче, пирӗн большевиксен партийӗ пек, пӗр партин те пысӑк авторитет пулман та, çук та» (Сталин).

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ тавра тата аслӑ Сталин тавра таччӑн пӗтӗçнӗ Совет Союзӗнчи халӑхсем хӑйсен çӗнтерӳллӗ çулӗпе шанчӑклӑн малалла пыраççӗ. Пӗтӗм тӗнчери историллӗ çӗнтерӳсен мухтавне илнӗ пирӗн ялавсем çинче Совет Союзӗнчи кашни çынӑн чӗрине кӗрсе вырнаçнӑ çакӑн пек сӑмахсем çуталса тӑраççӗ:

Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ—пирӗн çӗнтерӳсене хавхалантараканӗ тата организацилекенӗ!

Сывӑ пултӑр Совет халӑхӗн çулпуçӗ аслӑ Сталин!

В. КОРИОНОВ.

Инçетри Хӗвелтухăçӗнчи консультаци комиссийӗ çинчен

ВАШИНГТОН, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Палан корреспондентсем государство департаменчӗн тата Инçетри Хӗвелтухăçӗнчи консультаци комиссийӗн представителӗсене ыйтусем панӑ. Вӗсем Ассошиэйтед Пресс агентствин Мускаври корреспонденчӗ пӗлтерни çинчен ыйтнӑ. Çав корреспондент ТАСС çакӑн пек пӗлтерни çинчен каласа панӑ: Совет правительствин шухӑшӗпе, Инçетри Хӗвелтухăçӗнчи консультаци комиссийӗ тӑвас ыйтӑва Японии тӗлӗшпе ӗçлекен контроль органӗ туса хунӑ хыççӑн татса памалла, çав органра тӑватӑ державӑн—США-н, Великобританин, Совет Союзӗн тата Китайӑн—представителӗсем пулмалла, Америка представителӗ вӑл органӑн председателӗ пулмалла.

Инçетри Хӗвелтухăçӗнчи консультаци комиссийӗн представителӗ корреспондентсене çапла каланӑ: Инçетри Хӗвелтухăçӗнчи консультаци комиссийӗн прависем тӗлӗшпе кирек мӗнле ыйтӑва та комисси мар, тӑватӑ держава—Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Пӗрлешнӗ Королевство, Китай тата Совет Союзӗ—татса параççӗ, тенӗ.

Государство департаменчӗн представителӗ çапла каланӑ: Консультаци комиссийӗн полномочийӗсене улӑштарасси çинчен Пӗрлешӳллӗ Штатсем Совет Союзӗпе, Пӗрлешнӗ Королевствӑпа тата Китайпа канашлаççӗ, урӑх нимӗнле правительствӑпа та канашламаççӗ. Çав представитель каланӑ тӑрӑх, Комисси ыйтӑвӗсемпе интересленекен ытти правительствӑсене, паллах ӗнтӗ, канашлу мӗнле пыни çинчен пӗлтерсе тӑрӗç. Хӑйне пӗлтерсе тӑрас тӗлӗшпе Австрали уйрӑм требовани лартнине шута илсе, Пӗрлешнӗ Королевство доминионсен правительствисемпе канашласа пӑхать пулмалла. Анчах та Пӗрлешӳллӗ Штатсем ытти виçӗ державӑпа—Совет Союзӗпе, Пӗрлешнӗ Королевствӑпа тата Китайпа çеç канашлаççӗ. Корреспондентсенчен пӗри çапла ыйтнӑ: Совет Союзӗ ыйтнине тивӗçтерес тесе, Консультаци комиссийӗ Контроль совечӗ тӑвас ыйтупа ӗçлеме подкомисси туса хума пултарать-и? тенӗ. Государство департаменчӗн представителӗ: пултарать, тесе ответленӗ. Представитель тата çапла каланӑ: ТАСС пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ хыççӑн эпӗ лару-тӑру лайӑхланассине питӗ хытӑ шанса тӑратӑп, тенӗ.

Нимӗçсен суд системине урӑхла йӗркелесси çинчен калакан закон

БЕРЛИН, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Германири Контроль совечӗн 10-мӗш ларӑвӗнче нимӗçсен суд системине урӑхла йӗркелесси çинчен калакан закона йышӑннӑ. Вӑл законра çапла каланӑ:

«Контроль совечӗ 1945 çулхи октябрӗн 20-мӗшӗнче Германи халӑхне чӗнсе каланӑ тӑрӑх (унта Германи судӗсене демократиллӗ принципсемпе законлӑх тӑрӑх тата граждансем хӑйсен расине, национальноçне тата тӗнне пӑхмасӑрах закон умӗнче пӗртан пулмалла туса йӗркелемелли çинчен каланӑ) Контроль совечӗ çапла йышӑнать:

1-мӗш статья. Нимӗç судӗсене 1877 çулхи январӗн 27-мӗшӗнче йышӑннӑ законӑн 1924 çулхи мартӑн 22-мӗшӗнчи кӑларӑмӗ тӑрӑх йӗркелемелле (законсен пуххи, № 1, 294-мӗш стр.).

Çакӑн пек судсем туса хумалла: антсгерихт, ландсгерихт, оберландсгерихт.

2-мӗш статья. Антсгерихтпа ландсгерихт 1933 çулхи январӗн 30-мӗшӗччен пулнӑ законӗнче кӑтартнӑ ӗçсене пӑхмалла.

Антсгерихт гражданла ӗçсене, 2000 марка таран шыраса çырнисене пӑхма пултарать. Ландсгерихт антсгерихт решенийӗсене пӑрахӑçа кӑларма ыйтса çырнӑ заявленисене пӑхса тухать. Оберландсгерихт 2.000 марка таран шыраса илме çырнӑ заявленисем пирки ландсгерихт йышӑннӑ решенисене апелляци йӗркипе пӑхса тухать тата антсгерихтпа ландсгерихт уголовнӑй ӗçсем тӑрӑх йышӑннӑ решенисене тӗрӗслет.

Оберландсгерихт чи кӗçӗн суд пулса тӑмасть.

3-мӗш статья. Нимӗç судӗсем пур йышши преступленисене те пӑхса тухаççӗ, вӗсем çак ӗçсене çеç пӑхмаççӗ:

а) союзниксен оккупаци çарӗсем тӗлӗшпе тунӑ уголовнӑй преступленисене;

б) нацистсем, вӗсене пулӑшакансем тата ытти нимӗçсем союзниксен гражданӗсемпе пурлӑхне хирӗç тунӑ уголовнӑй преступленисене, çавӑн пекех тата нацистла режима тепӗр хут ура çине тӑратма е нацистла кирек мӗнле организацие те çӗнӗрен ӗçлеттерме хӑтланнине;

в) союзлӑ государствӑсен çар çыннисене е гражданӗсене уголовнӑй йӗркепе суда панӑ пулсан, çав ӗçсене;

г) çар командованийӗ кӑтартнӑ тӑрӑх нимӗç судӗсене пӑхма чарнӑ гражданла тата уголовнӑй ытти ӗçсене, союзлӑ государствӑсен çар хӑрушсӑрлӑхне пӑсакан ӗçсене.

Союзлӑ çарсен хӑрушсӑрлӑхне хавшатакан преступленисене пӑхса тухма çар командованийӗ нимӗç судӗсене пама пултарать.

4-мӗш статья. Нимӗç судӗсене урӑхла йӗркелемелли çинчен калакан çак закона пурнăçа кӗртмешкӗн нацистла партин мӗнпур членӗсене, унта ячӗшӗн кӑна тӑманнисене, тата гитлерла режим вӑхӑтӗнче çынсене асаплантарса çӳренӗ ытти мӗнпур çынсене судьясемпе прокурорсен вырӑнӗнчен кӑлармалла, малашне вӗсене çав вырӑнсене лартмалла мар.

5-мӗш статья. Çак закона пурнăçа кӗртнӗ вӑхӑтра çар командованине Германин суд законӗсене майӗпен çакӑнта кӑтартнӑ тӑрӑх йӗркелеме ирӗк парас.

6-мӗш статья. Çак закон ӑна пичетлесе кӑларнӑ вӑхӑтран пуçласа вӑя кӗрет, çар командованине çак закона пурнăçа кӗртме хушас.

Çакна Берлинра 1945 çулхи октябрӗн 30-мӗшӗнче çырнӑ.

Генерал **КЕНИГ**
Совет Союзӗн Маршалӗ **ЖУКОВ**
Арми генералӗ **ЭЙЗЕНХАУЭР**
Фельдмаршал **МОНТГОМЕРИ.**

«ФРОН НАСЬОНАЛЬ» ХАÇАТ КЕЙТЕЛЕ ДОПРОС ТУНИ ÇИНЧЕН

ПАРИЖ, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 18-мӗшӗнче Эттли общинӑсен палатинче çапла каланӑ: эпӗ нимӗçсен верховнӑй командованийӗн генеральнӑй штабӗн начальникӗ пулса ӗçленӗ Кейтель хӑйне допрос тунӑ чухне каласа панине пӗлтерме пултараймастӑп, мӗншӗн тесен «нимӗçсен аслӑ офицерӗсем çавӑн пек калани нумай пулнӑ. Çав офицерсем пире иккӗлентермелли сӑлтавсене пула çавӑн пек тунӑ пуль, çавӑнпа та темиçе офицер каланине пичетлесе кӑларни тӗрӗс мар вывод тума май панӑ пулӗччӗ», тенӗ.

«Фрон насьональ» хаçат Англи премьер-министрӗн çав шухӑшне «тӗрӗс мар» тесе шутласа, ноябрӗн 1-мӗшӗнче тухнӑ номерте Кейтель допрос тунӑ чухне каланине пӗтӗмпех пичетлесе кӑларнӑ, вӑл ӑна «официальнӑй доклад» ран илнӗ».

«**Ыйту:** Мюнхенри кризис вӑхӑтӗнче Германи пӗтӗм тӗнчери вӑрçа хатӗр пулнӑ-и?

Ответ: Çук, мӗншӗн тесен эпир унччен стратегипе тактика тӗлӗшӗнчен пӗртте хатӗрленмен.

Ыйту: Францие Англи Мюнхенра тунӑ сӗнӳпе килӗшмен пулсан, Германи çар вӑйӗпе тапӑннӑ пулӗччӗ-и?

Ответ: Тапӑнас çукчӗ пуль тесе шутлатӑп эпӗ, мӗншӗн тесен, эпӗ ун çинчен каларӑм ӗнтӗ, çав вӑхӑтра эпир вӑрçа хатӗрленсе çитмен, уйрӑмах та Франци хӑйӗн Чехословаки тӗлӗшпе илнӗ обязательствисене пурнăçлас пулсан, эпир вӑрçӑ пуçлама пушшех хатӗр пулман».

Малалла Кейтель çапла каланӑ: «1938 çулхи май уйӑхӗнче нимӗç çарӗсем Австрие оккупациленӗ вӑхӑтра Чехословаки мобилизаци туса ирттерме пултарасси çинчен сӳтсе-явнӑ. Ун чухне эпӗ хамах фюрера çапла каларӑм: Чехословаки мобилизаци тӑвас пулсан, Германи Австрие йышӑнма пултарайман пулӗччӗ, терӗм».

Ыйту: Чемберленпа тӗл пулса калаçас умӗн фюрер çирӗппе Германин çар хӑвачӗ çинчен канашламан-и?

Ответ: Çук, канашламан. Вӑл пирӗн çӗршывӑн пурлӑхне лайӑх пӗлсе тӑнӑ, вӑл Мюнхен вӑхӑтӗнче эпир вӑрçӑ пуçлама хатӗр маррине пӗлнӗ.

Ыйту: Англипе Франци тата Совет Союзӗ Чехословаки майлӑ пулнӑ пулсан тата Германи Италипе калаçни чарӑнса ларнӑ пулсан (çав калаçусем Мюнхенра килӗшӳ тума май панӑ), вӑрçӑ тӗлӗшӗнчен мӗнле результатсем пулнӑ пулӗччӗç?

Ответ: Германи вӑйӗсем çавӑн пек коалицин вӑйӗпе танлашма пултарайман. Çав вӑхӑтра вӑрçӑ пуçласа яни ухмахла хӑтланни пулнӑ пулӗччӗ.

Ыйту: Мюнхенри килӗшӗвӗн политикӑллӑ тӗллевӗ—Совет Союзне Европӑри ӗçсенчен пӑрса ярасси пулман-и?

Ответ: Шӑп çавӑ пулнӑ. Чехословаки Совет Союзӗн çар бази пулса тӑма пултарать тесе шутланӑ эпир, вара стратеги енчен питӗ хӑрушӑ результатсем пулнӑ пулӗччӗç».

Тепӗр кунне Кейтель хӑйӗн сӑмахне çапла тӳрлетсе каланӑ: «Çав вӑхӑтра Германи вӑрçа хатӗрленни çинчен ӗнер хам калани çумне эпӗ çапла хушса каласшӑн: Мюнхенри конференцие тӑвас вырӑнне Англи, Франци тата Совет Союзӗ пӗрлешнӗ пулсан, Гитлер вӗсене пырса çапма пултарайман пулӗччӗ».

Çак документ çинчен «Фрон насьональ» хаçат çапла çырать: «Çак историе кӗрсе юлнӑ документ ак çакна лайӑх кӑтартса парать: Хӗвеланăçӗнчи блокшӑн тӑракан çынсем хӑйсен политикине йышӑнтарма пултарсан, пирӗн çӗршыв çав тери пысӑк хӑрушлӑх умӗнче тӑнӑ пулӗччӗ. Вӗсен теорийӗ Мюнхенри ултава пӳркенчӗкпе витсе пытарни çеç пулса тӑрать. Çав ултав пире ăçта илсе çитерни пуриншӗн те паллӑ».

НЕДИЧА, РУПНИКА ТАТА ЫТТИ СУТӐНЧӐКСЕНЕ ЮГОСЛАВИ ВЛАÇӖСЕН АЛЛИНЕ ПАРАÇÇӖ

БЕЛГРАД, ноябрӗн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Хаçатсенче официальнӑй йӗркепе çапла пичетлесе кӑларнӑ: октябрӗн 19-мӗшӗнче Англин шалти ӗçсен министерстви Югославии правительствине çапла пӗлтернӗ: çитес сывах вӑхӑтрах Британи влаçӗсем аллинче тӑракан вӑрçӑ преступникӗсемпе сутӑнчӑксене 14 çынна Югослави влаçӗсен аллине параççӗ. Вӑл шутра çаксем пур: Мила Недич, Лев Рупник, Милан Ачимович, Милослав Василевич, Стефан Иванич, Душан Пантич, Джура Докичпа Йован Попович генералсем тата ыттисем те.

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ÇАМРӐКСЕН КОНФЕРЕНЦИЙӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 2-мӗшӗнче пӗтӗм тӗнчери çамрӑксен конференцийӗн виççӗмӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ. Ларура тӑватӑ комисси председателӗн доклачӗсене итленӗ. Çав комиссисем «Çамрӑксем ирӗклӗхпе лайӑх пурнăçшӑн кӗрешесси çинчен» ятлӑ ыйтӑва сӳтсе-явнӑ.

«Фашизма хирӗç пыракан вӑрçа çамрӑксем хутшӑнасси çинчен» ятлӑ ыйтупа ӗçлекен комисси председателӗ поляк çамрӑкӗсен делегачӗ Витольд Лукашевич çапла каласа кӑтартнӑ: комисси ӗçне 70 делегат активлӑн хутшӑнчӗç. Тухса калакансем нумайӑшӗ Совет Союзӗнчи, Англири, Америкӑри, Китайри, Францири, Польшӑри тата ытти çӗршывсенчи çамрӑксем фашизма çӗнтерме пулӑшнине палӑртрӗç. Колонисенчен килнӗ делегатсем хӑйсен çӗршывӗсенчи çамрӑксем пурнăç условийӗсене лайӑхлатассишӗн, ирӗклӗхшӗн тата колонисенчи пусмӑрлӑха хирӗç мӗнле кӗрешни çинчен каласа кӑтартрӗç. Делегатсем Испанири, Португалири тата Аргентинӑри фашистла правительствӑсемпе çыхӑну тытма пӑрахма чӗнчӗç.

«Фашизм юлашкийӗсемпе кӗрешесси çинчен» ятлӑ ыйтӑва сӳтсе-явнӑ комисси председателӗ—республикӑллӑ Испани çамрӑкӗсен делегачӗ Аскарате конференцие çапла каласа кӑтартнӑ: комисси фашистла Испанипе дипломати, экономика тата культура тӗлӗшпе çыхӑнса тӑма пӑрахма ыйтмалла, тесе йышӑнчӗ; Испанире политикӑшӑн тӗрмере ларакансене, уйрӑмах çамрӑксен 72 представительне, халех ирӗке кӑларма ыйтма сӗнет, мӗншӗн тесен çав çамрӑксене персе пӑрахма пултараççӗ. Испанири лару-тӑрӑва тата франкистсен концентрациллӗ лагерӗсенчи хӑрушлӑха пӗрлесе тӗпчеме ятарласа уйӑрнӑ делегаци яма сӗнет; çавӑн пекех тата Пӗрлешнӗ нацисен çитес конференцийӗнче Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗнчен Аргентинӑна кӑларса пӑрахасси çинчен ыйту лартма сӗнет.

Виççӗмӗш комисси «çирӗп тата нумай вӑхӑтлӑха пыракан мирлӗ пурнăç туса хурас ӗçе çамрӑксем хутшӑнасси» çинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе-явнӑ. Унӑн председателӗ Чехословаки çамрӑкӗсен делегачӗ Гайек пулнӑ. Вӑл конференцие çав комиссин ӗçӗсем çинчен каласа кӑтартнӑ.

Тӑваттӑмӗш комисси фашистла захватчиксем çаратса хӑварнӑ çӗршывсенче хуçалӑха ура çине тӑратас ӗçе çамрӑксем хутшӑнасси çинчен сӳтсе-явнӑ. Ку комисси председателӗ Албанири çамрӑксен делегацийӗн пуçлӑхӗ Паграми пулнӑ. Вӑл конференцие çав комиссин ӗçӗсем çинчен каласа кӑтартнӑ.

Конференци комиссисен председателӗсен доклачӗсене пӗтӗмӗшпе илсе çирӗплетнӗ. Унтан, совет делегачӗ Ольга Челеткина сӗннипе, çав докладсем тӑрӑх тӑратнӑ пӗтӗмӗшле резолюцие сӳтсе-явма тытӑннӑ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 1-мӗшӗнче Пӗтӗм тӗнчери çамрӑксен конференцийӗн каçхи ларӑвӗнче конференцин кун йӗркинче тӑракан пӗрремӗш ыйту тӑрӑх («Çамрӑксем ирӗклӗхпе лайӑх пурнăçшӑн кӗрешесси çинчен» ятлӑ ыйту тӑрӑх) сӗннӗ пӗтӗмӗшле резолюцие никӗсе хурса, малалла сӳтсе-явас тесе йышӑннӑ, çитес ларусенче çав резолюцие тӳрлетсе пӗтӗмӗшпех çирӗплетмелле пултӑр, тенӗ. Вара ун хыççӑн делегацисем кун йӗркинче тӑракан иккӗмӗш ыйту тӑрӑх («Çамрӑксен вӑрçӑ хыççӑнхи нушисем» ятлӑ ыйту тӑрӑх) тунӑ докладсене итленӗ. Ку ыйтупа Канада, Инди, Норвеги, Польша тата Итали делегацийӗсен представителӗсем, Совет Украинин делегацийӗн пуçлӑхӗ Костенко тата Латинла Америкӑри çӗршывсен делегачӗ докладсем тунӑ.

СОВЕТ ФУТБОЛИСЧӖСЕМ АНГЛИЕ КАЯÇÇӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Англири «Ивнинг стандарт» тата «Ивнинг ньюс» хаçатсем совет футболисчӗсен «Динамо» команди Англие пырасси çинчен пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ.

Çав хаçатсемех Англири футболистсен ассоциацийӗн секретарӗ Роуз каланине пичетленӗ. Роуз çапла каланӑ: спорт ӗçне ертсе пыракан официальнӑй представительсем те, спорта юратакансем те пурте совет футболисчӗсем Англие килессине хавасланса кӗтсе тӑраççӗ. Совет футболисчӗсем Англие килни пирӗншӗн питӗ интереслӗ ӗç пулса тӑрать.

«Дейли геральд» хаçатӑн спорт çинчен çырса тӑракан сотрудникӗ çапла çырать: «Динамо» команди мӗн тери вӑйли çинчен эпӗ калама пултараймастӑп, анчах та эпӗ вӗсем пирӗн футболистсене çӗмӗрсе тӑкассине кӗтме хатӗр. Эпӗ футбола юратакансен ячӗпе вырӑс футболисчӗсене туслӑн алӑ паратӑп».

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ПӖЛТЕРНИ

1945 çулхи июлӗн 1-мӗшӗччен ӗç çулталӑкӗ пӗтнӗ рабочисемпе служащисене усӑ курман отпускшӑн тӳлемелли укçана вырӑнти бюджетран укçа илсе тӑракан хӑшпӗр учрежденисемпе предприятисем ку таранччен те перекет кассине хывман. Çав укçана 1945 çулхи ноябрӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр перекет кассине хывмалла.

Чӑваш АССР-ӗнчи перекет кассисемпе кредит управленийӗ.

2—1.

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛА АСЛА РЕВОЛЮЦИ 28 ÇУЛ ТУЛТАРНӐ ЯТПА ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ МИТИНГПА ДЕМОНСТРАЦИ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН

1945 çулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнче 11 сехетре Шупашкар хулин Хӗрлӗ площадӗнче ӗççыннисен митингӗпе демонстрацийӗ пулать.

Колоннӑсене вырнаçтарса тӑратас тата куçарса çӳрес тӗлӗшпе çакӑн пек йӗрке йышӑннӑ:

1. Митингпа демонстраци вӑхӑтӗнче пӗчӗк çӳрекен çынсене 10 сехетре Хӗрлӗ площаде кӗртме чарӑнаççӗ.
2. Пур организацисем те Хӗрлӗ площаде колоннӑсене ертсе пыраканӗсемпе пӗрле пырса кӗреççӗ.
3. Колоннӑсене вырнаçтарса тӑратассишӗн тата куçарса çӳрессишӗн хулари Çар Комиссарӗ Елистратов подполковник ответлӑ.
4. Митингпа демонстраци вӑхӑтӗнче Хӗрлӗ площадьри йӗркелӗхшӗн Милици управленийӗн службӑпа боевой хатӗрленӳ отделӗн начальникӗ милици майорӗ Палихов юлташ тата Хулари милици отделенийӗн начальникӗ милици капитанӗ Зекин юлташ ответ тытаççӗ.

Хула Совет исполкомӗ.
ВКП(б) хула комитечӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактортӑн—0-67, заместителен — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнăç пайӗн—3-97, промышленность пайӗн—3-99, ялхуçалӑх пайӗн—3-99, рабселькорсен пайӗн—0-67, издательстви конторин — 0-23.

НТ 00237 Типография ... управления ... промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16 000 экз.